*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

90 (2403) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

# ХРЕСЧЕН САССИ

ГОЛОС КРЕСТЬЯНИНА

ЮН КУН

2013,
чӳк, 20

АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

# Ĕнер – хушма хуçалăх хуçи, паян – фермер

**Пĕлтĕр çĕр-шывра «2012-2014 çулсенче ферма ĕçне пуçăнакансене пулăшасси» программа хута кайрĕ. Чăваш Енре те патшалăх пулăшăвĕпе усă курма тытăнчĕç. Иртнĕ çул республикăри 51 фермер тавăрса памалла мар субсиди (пĕтĕмпе 54 млн тенкĕлĕх) илнĕ. Кăçал комисси конкурспа 43 çынна суйласа илнĕ. Вĕсене фермер (хресчен) хуçалăхне аталантарма тата йăла ыйтăвне татса пама грант шучĕпе 47 млн тенкĕ уйăрса панă.**

Çемье фермине йĕркелекенсен те патшалăх пулăшăвĕпе усă курма май пур. Иртнĕ çултанпа ферма тума кайнă тăкакăн 60 процентне бюджет шучĕпе саплаштарма пултараççĕ. Паллах, субсидие илес тесен конкурса хутшăнмалла, ĕçлеме пултарнине çирĕплетсе памалла. Субсиди виçи сумлă. 2012 çулта конкурсра çĕнтернĕ 3 фермер çемье ферми тума кайнă тăкака саплаштарма 28,94 млн тенкĕлĕх грант тивĕçнĕ. Кăçал 7 фермера 33,8 млн тенкĕ уйăрса пама йышăннă.

**Çĕрпӳ тăрăхĕнче фермер хуçалăхĕсем мĕнле аталанса пыраççĕ-ши? Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Борис МАРКОВ каласа парать:**

– 90-мĕш çулсенче пирĕн тăрăхра та фермер хуçалăхĕсем йĕркелеме тытăнчĕç. Çакă колхоз-совхозсем арканнипе тата пай çĕрĕсем уйăрса панипе çыхăннă. Вăй илсе аталаннă хушма хуçалăхсем фермера куçрĕç. Çапах ытти районсемпе танлаштарсан Çĕрпӳ енче вĕсем ытлашши нумай тесе калаймăн. Пурĕ 19 фермер, çав шутра йĕркеллĕ ĕçлесе пыраканнисем – 15. Пурин те пуçарулăх, пултарулăх çитсе пымасть çав. Хăшĕ-пĕри вара республика шайĕнче палăрма пултарчĕ. Акă Андрей Хорошавин хуçалăхĕ Чăваш Енре чи пысăккисенчен пĕри тесен те йăнăшмăп. Унăн усă куракан çĕр кăна 3 пин гектар, çав шутра 2,5 пин гектарĕ çинче пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене çитĕнтерет. Кăçал районе кĕрхи культурăсене акассипе плана тултараймарĕ. Хорошавин вара палăртнине туллин пурнăçларĕ, 1206 гектар çинче кĕрхи культурăсене акса хăварчĕ.



Александр Артемьев фермер çĕр улмипе купăста çитĕнтерет. Çулталăкĕпех пахча çимĕçне Çĕрпӳри ача сачĕсене, шкулсене тивĕçтерсе тăрать.

Фермерсем районта хуçасăр юлнă çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртеççĕ. Кăçал, акă, Хорошавин юхăннă хуçалăхăн 500 гектарне илчĕ. Иван Федоровпа (325 гектар) Сергей Николаев (6) усă курмасăр выртнă çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртрĕç.

**– Борис Николаевич, районта «Фермер ĕçне пуçăнакан» тата «Çемье ферми» программăсемпе усă куракансем пур-и?**

– Малтанах хăшĕ-пĕри çĕнĕ программăсем туллин хута каясса, тавăрса памалла мар укçапа тивĕçтерессе шансах каймастчĕ. Хăйсен куçĕпе курса ĕненнĕ хыççăн тинех хускалма тытăнчĕç. Конкурса хутшăнакансен йышĕ ӳссе пыни сисĕнет. 2012 çулта фермер ĕçне пуçăнакансем пиллĕкĕнччĕ, иккĕшĕ çĕнтерме пултарчĕç. Алексей Афанасьев пĕвере пулă ĕрчетме, Михаил Михайлов теплица хуçалăхне йĕркелесе яма грант илчĕç.

Кăçал конкурса çиччĕн хутшăнма кăмăл турĕç. Çав шутран виççĕшĕ патшалăх пулăшăвне тивĕçни пирĕншĕн те пысăк çитĕнӳ. Ирина Степанова (Матикасси ял тăрăхĕ) грант укçипе (1,1 млн тенкĕ) 50 ĕне тытмалăх сĕт-çу ферми тунă. Надежда Чиркина (Иккĕмĕш Вăрманкасси) уйăрнă 970 пин тенкĕпе мăйракаллă шултра выльăх фермине юсаса çĕнетнĕ, ял хуçалăх техники туяннă. Андрей Михайлов фермер (Йĕкĕрвар) хуçалăхĕнче сурăхсем ĕрчетме палăртнă. Патшалăх пулăшăвĕ (1 млн тенкĕ) 200 сурăх тытмалăх фермăна юсаса çĕнетме тата ял хуçалăх техники илме кайнă.

Юлашки виçĕ çулта районти пысăк предприятисенче сурăхсене пĕтерсе пычĕç темелле. Хушма тата фермер хуçалăхĕсенче кăна вĕсен йышĕ чакмарĕ. Михайловка ял тăрăхĕнчи Игорь Михайлов хушма хуçалăхĕнчех 200 пуçа яхăн. Метикасси енчи Олег Степанов «Романовски» ăрат ĕрчетет. Андрей Михайлов фермер хуçалăхĕ вăй илсе кайсан районта сурăх ĕрчетесси тепĕр хут çĕкленĕ. Вăл та «Романовски» ăратпа ĕçлесшĕн. Сурăх какайне вырнаçтарассипе йывăрлăх пулмалла мар.

2-мĕш стр. ➔

ПУРНĂÇ ТАППИ

## Çĕр хутшăнăвĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк

Шупашкарта федерацин Атăлçи субъекчĕсен пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕ енĕпе ĕç тăвакан органĕсен ертӳçисен канашлăвĕ иртнĕ.

– Çĕр ресурсĕсем регионсен социаллă пурнăçĕпе экономикин аталанăвĕнче тата инвестици хывас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнаççĕ, – тенĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев. – Вĕсем ял тăрăхĕсен пурнăçне те пысăк витĕм кӳреççĕ. Пасар хутшăнăвĕсене пула çынсем улшăнаççĕ. Обществăна усă кӳме тĕллев тытнă предпринимательсем бизнеса аталантарасшăн. Çав вăхăтрах хăшĕ-пĕри вăйра тăракан саккунсене пăсса укça çăмăллăн тăвасшăн. Çĕр хутшăнăвĕсем федерацин Атăлçи округĕнчи кашни регионтах кăткăс. Субъектсен экономики аталанать. Агропромышленноç комплексĕ вăй илнĕ. Çакăнпа пĕрлех патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕпе, çĕрпе усă курнă чухне йĕркене пăхăнман тĕслĕхе, коррупци палăрăмне нумай шута илеççĕ. Вĕсем Чăваш Енре те çителĕклех. Çитменлĕхе пĕтерес килет. Анчах ыйтусене хăвăрт татаймастăн. Мĕншĕн тесен вĕсем федерацин Çĕр, Пурăнмалли вырăн кодексĕсемпе, саккунсемпе çыхăннă. Вĕсене улшăнусем кĕртессипе кая юлсан ĕç тăвакан органсем йывăрлăха лекеççĕ.

М.Игнатьев республикăн тата муниципалитетăн тивĕçлĕ органĕсен малашне пушă выртнă çĕре пусă çаврăнăшне кĕртес, çĕр хутшăнăвĕнчи саккунпа шайлашса тăман, коррупци витĕмĕллĕ килĕшӳсене тăрă шыва çине кăлармалли не палăртнă.

КУЛĂШ, ПУЛĂШ!




ПОЧТАЛЬОНПА – ПĔР КУН



## Чун апачĕсĕр епле-ха?

**Кĕрхи хĕвел пайăркисене çĕр çине вăйсăррăн сапалать. Вăраха кайнă сумăр хыççăн сукмак типеймен-ха. Юрать Кашмашăн тĕп урамĕпе асфальт сарнă, утма та çăмăлрах. «Паян çанталăкĕ аван, сумăрта çӳресе хăшкăлтăм ĕнтĕ», – савăнать Муркаш районĕнчи Кашмаш ялĕн почтальонки Светлана Смирнова. Хул пуççи урлă çакнă сумки çĕрелле йывăррăн усăнать. Анчах çакна вăл туймасть та тейĕн, такăр çулпа васкаса утать. Кĕрхи кун кĕске, хăвăрт тĕттĕмленет. Унччен хаçат-журнал, пенси валеçсе пĕтересшĕн вăл. Тата çырăнтару пирки те манмалла мар.**

Яваплă ĕç ялти суту-илӳ çуртĕнчен пуçланчĕ. Унта халăх яланах пулакан. Апла харăсах темиçе куяна тытма май пур. Акă Агния Любимова кинемей хĕех тавар туянма çӳрет. Ăна вара пенси памалла.

– Вулама юрататăп, сакăр вуннăран каçса та куçлăхпа усă курмастăп. Хаçатсăр тăлăха юлнăн туятăп хама,– сăмахлать вăл. – Çитес çур çулта илсе тăма «Хресчен сасси», «Çамрăксен хаçачĕ», «Çĕнтерӳ ялавĕ» çырăнтăм. Почтальон килессе чӳречерен пăхса кĕтсе ларатăп. Вăл маншăн тăван çитĕнех туйăнать.

2-мĕш стр. ➔

ÇЫРĂНТАРУ – 2014

ХРЕСЧЕН САССИ

Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил. Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм, Васка, çырăнса ил!

Хресчен сасси –
218 тенкĕ те 34 пус.
Индексĕ – 54838

Хресчен сасси- Кил –
99 тенкĕ те 72 пус.
Индексĕ – 43887

ÇАНТАЛĂК

| | Вăхăт | 20.11 | 21.11 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре | –2 | –2 |
| | 14–16 сехетре | 0 | +1 |
| Сумăр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 760 | 758 |

ПОЧТАЛЬОНПА – ПĔР КУН

# Малашлăха шанса

«Хĕрсем маттур манăн, – тет Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхальти почта уйрăмĕн пуçлăхĕ Надежда Капитонова. – Вĕсем пулмасан ĕçлеме те йывăр. Виççĕшĕ те тăрăшса вăй хураççĕ».

Сăмах почтальонсем пирки пынине вулакан ăнланчех пулĕ. Виçĕ яла хаçат-журналпа тивĕçтереççĕ вĕсем. Апрушнай вара вăрман варринчех вырнаçнă. 18 килте çын пурăнать. «Хаçат-журнал вулама юрататать унти халăх. Кашниех мĕн те пулин çырăнать», – калаçăва хутшăнчĕ Валентина Фролова почтальонка. Ку тăрăхри çынсене хаçат-журнал вăл салатать. Ăна мăшăрĕ пулăшать, кулленех çăмăл машинăпа çула тухаççĕ вĕсем.

Валентина Григорьевнăн почтăри ĕç стажĕ 30 çул ытла. Малтанах вăл Шупашкарта операторта ĕçленĕ, 1998 çултанпа вара – Нăрваш Шăхалĕнчи çыхăну уйрăмĕнче. Çавăнтанпа почтальон профессине улăштарман. «Çулсерен ĕçлеме кăткăсланса пырать, – малалла тăсăлать калаçу çăмхи. – Малтанах манăн планпа 253 экземпляр хаçат-журнал çырăнтармаллаччĕ. Халĕ вара – 396. Юрать-ха пенсионерсем пур. Вĕсемсĕр почта тытăнса тăраймасть».

Ку уйрăмри почтальонсем 0,7 ставкăпа (участоксем те пысăк) ĕçлеççĕ. Ытти тăрăхрисем пекех хаçат-журнал та салатаççĕ, вĕсене сутаççĕ те, тавар та йăтса утаççĕ. Йăтса утни çеç мар, ăна вырнаçтармалла. Унăн та планĕ пур. Унсăр пуçне электроэнерги, налук, телефон хучĕсене салатмалла, пенси памалла. Ĕç укçи вара – 3164 тенкĕ. «Ку укçапа мĕнле пурăнмалла?– пăшăрханаççĕ вĕсем. – Пирĕн те çемье пур, ачасене вĕрентмелле. Шалу вара хамăра валли те çитмест. Пысăк çăрса миçе мăшăр атă, калуш пĕтеретпĕр-ши?»

Патăрьел районĕ хуларан аякра вырнаçнипе ку тăрăхра ĕç йăпăр-япăр тупаймăн. Çавна май пĕчĕк шалупах çырлахма тивет. Арçын пулсан унпа килĕшмĕччĕ. Хĕрарăм, кашни пуса перекетлеме вĕреннĕскер, килте ахаль лариччен çемьене кăштах усă пултăр тет. Ĕç хушăнса пыни, ставкăна çав-çавах ӳстерменни пăшăрхантарать вĕсене. Çапах та малашлăха шанса вăй хураççĕ почтальонсем.



«Çырăнтару планĕ пирĕн пысăк: 1188 экземпляр хаçат-журнал çырăнтармалла, – терĕ Надежда Владимировна. – Плана кашни çулах тултаратпăр. Йӳнĕ хакпа çырăнтармалли вунă кунлăх вăхăтĕнче ял халăхĕ кăçал хастар пулчĕ. Унсăр пуçне почтальонсем хаçат-журнал сутассипе те маттур. Юпа уйăхĕнче çеç 20 пин тенкĕлĕх сутнă. Ку енĕпе эпир яланах малти вырăнсене йышăнатпăр».

Халăх «Хыпар» Издательство çурчĕ кăларакан хаçат-журналтан хăш кăларăмпа кăсăкланни çинчен ыйтмасăр чăтаймарăм. «Манăн участокра ытларах «Çамрăксен хаçатне» çырăнаççĕ, – терĕ Галина Андреева. – Василий Васильев вара çулсеренех 5-6 чăвашла хаçат илсе тăрать. Елена Чебукова «Чăваш хĕрарăмне» кăмăллать. Ăна тухма пуçланăранпах çырăнса илет».

Людмила Упорова участокĕнче «Хресчен сасси», «Хресчен сасси-Кил», «Хыпар» хаçатсене юратса вулаççĕ. «Вĕсене пĕр çынсемех илсе тăраççĕ. Кашни çулах çырăнаççĕ, хăйсен тусĕсене пăрахмаççĕ», – паллаштарчĕ ĕçĕ-хĕлĕпе çамрăк почтальон.

Лидия Анисимова, Нина Мукаева, Валентина Алексеева, Иван Яковлев, Лидия Калашникова, Надежда Эриванова, Геннадий Кошкин хастар вулакансем пулнине пĕлтерчĕç. Вĕсем хаçат-журналсăр пĕр кун та пурăнаймаççĕ. Çамрăк ăрăва вара аслисемпе танлаштарма çук. «Тантăша», «Теттене», «Саманта» çырăнса илекен çав тери сахал. Ачи-пăчи те пур, ялта вăтам шкул та ĕçлет.

***Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Ишпуç ялĕнче вара лару-тăру питĕ кăткăс. Шалу сахал пулнăран почтальон ĕçне пăрахнă. Унăн та ĕç укçи 3 пин тенкĕ ытларах пулнă.***

***Хаçат-журнала, çырусене халĕ лавккана пырса параççĕ. Ял çынни унта кайса илет. Кун пек чухне кам ĕлкĕрет – çав хаçатлă пулать. Тепри, ăна çырăннăскерех, хаçатсăр юлма та пултарать. Çитес çул валли çырăнасси пирки никам та шухăшламасть. Ара, халăха та ăнланма пулать. Почтальон тупăнмасăр йĕрке пулмасть. Унсăрăн укçана çилпе вĕçтерни çеç. Халĕ почтальон шалăвне ӳстерессе кĕтеççĕ. 500-600 тенкĕ хушăнни никама та хăпартлантармĕ. Асăннă тăрăхра почтальон çак укçашăн кĕрхи, çурхи пылчăка çăрасси иккĕлентерет.***

**Валентина ПЕТРОВА.**

# Ĕнер – хушма хуçалăх хуçи, паян – фермер

← 1-мĕш стр.

Сăмах май, паян унăн хакĕ ĕне какайĕнчен те хаклăрах, килограмĕ 250 тенкĕпе. Çĕрпӳ тăрăхне Тутарстанран та туянакансем килеççĕ.

Шел, çемье ферми тума патшалăх пулăшăвне илекенсем пулмарĕç. Конкурса хутшăнчĕç-ха вĕсем, çĕнтерме бал çитеймерĕ пулас.Çемье фермисем районта пурха. Валентина Егорова, акă, мăйракаллă шултра выльăх 60 пуç тытать. Ӳсен-тăран, пахча çимĕç çитĕнтерет. Çитес çул вăл конкурсра çĕнтерсе «Çемье ферми» программăна лекессе шанатпăр. Унăн ĕçĕ куç умĕнчех-çке.

Ял хуçалăхĕнче хăватлă техникăсăр май çук. Кăçалхи 9 уйăхра районта 43 тĕрлĕ ял хуçалăх техники 102,3 млн тенкĕлĕх туяннă. Е малтанхи çулхин 120 процентĕ. Иван Федоров фермер 10 млн тенкĕлĕх техника илнĕ. Андрей Хорошавин, «Луч» фермер хуçалăхĕсем те çулсерен машина-трактор паркне çĕнетсе пыраççĕ.

Фермерсене районти мероприятисене яланах чĕнме тăрăшатпăр. Пĕрле пухăнса «çавра сĕтел» хушшинче çивĕч ыйтусене сӳтсе яватпăр. Вĕсем патшалăхăн ытти пулăшăвĕпе те усă кураççĕ: çăмăллатнă кредит, сутнă сĕтшĕн субсиди илеççĕ тата ытти те. Çакна та палăртса хăварас килет. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курас тесен ĕç-хĕле документсене кăтартмалла, статистика отчетне тăратмалла. Эпир документсене йĕркелеме пулăшатпăр.

Кăçал фермерсене страхлав взносне çулталăкне 36 пин тенке яхăн тӳлеттермелле туни нумайăшĕн кăмăлне каймарĕ. Районсенче фермер хуçалăхне хупакансем те пулчĕç. Вĕсемшĕн хушма хуçалăхпа ĕçлесе пыма çăмăлрах – капла налук тӳлемелле мар. Вăйлă аталаннă, хуçалăхра выльăхчĕрлĕх йышлă усракан хушма хуçалăхсем фермера куçма тăхтани çакăнпа çыхăннă тăр. Тепле пулсан та пысăк хуçалăхра ĕçлеме-çаврăнма та çăмăлрах.

**Лариса НИКИТИНА.**

# Чун апачĕсĕр епле-ха?

← 1-мĕш стр.

– Хушма хуçалăхра усă курма кирлĕ сĕнӳ-канаша вулама юрататăп, хаçачĕсене те çавна кура çырăнса илетĕп, – калаçăва хутшăнать Маргарита Серафимова сутуçă. – Манăн чуна тивекен пысăках мар калавсем вулас килет. Унччен «Хресчен сассинче» номертен-номере пичетленсе тухаканччĕ вĕсем. Çитес çулшăн çырăнтăм-ха, ман сĕнĕве шута илсен аванччĕ.

Смирнова ĕçне вĕçленĕ хыççăн çынсемпе сыв пуллашса малалла утрăмăр. «Кун пек çанталăкра утнă çемĕн утас килет, ывăннине те туймастăн», – сăмахлать хĕрарăм.

Ирхине 8 сехетре пуçланать унăн ĕçĕ. Муркашри почтăна çитсе сумкине хаçат-журналпа, çырусемпе, таварпа тултарать. Унтан Кашмаш, Хуракасси Выççăлккă ялĕсенче пурăнакансем патне васкать. Пĕр енне кăна 4 çухрăм. Кунĕпе вара 18 çухрăм такăрлатать вăл. Унччен район центрне автобуспа та çӳренĕ. Анчах каялла таврăнма ăна чылай кĕтсе тăма тивнипе велосипед çине куçнă.

Каçхинеултă сехетре çаврăнса çитет килне. Ĕç нумай чухне каярах та. «Кил-тĕрĕшре ачасем пулăшаççĕ. Эпĕ таврăннă тĕле выльăх-чĕрлĕхе пăхаççĕ, апат пĕçереççĕ», – терĕ Светлана Геннадьевна. Асли Шупашкарта пĕлӳ илет-мĕн, кĕçĕннисем шкулта вĕренеççĕ. Вĕсем юнашар чухне амăшне çăмăлрах. Мăшăрĕ Мускава ĕçлеме çӳренипе çĕклем килтисем çине тиенет. «Ачасем вĕренсе тухса кайсан йывăртарах тивĕ, анчах пĕрре хăнăхнă ĕçе мĕнле пăрахас?» – тет вăл. Почтальонра вунă çула яхăн тăрăшнă май ялти кашни çыннах пĕлсе çитнĕ. Ăна урама тухсах кĕтсе илеççĕ.

– Хам та халăхпа хутшăнма юрататăп. Хăш-пĕр чухне ĕçлеме мар, çынсемпе калаçма, курма тухнăн туятăп. Ялти хыпар-хăнара пĕлсе тăратăн. Çырăнтару вăхăтĕнче кашниннипе тĕл пулмалла, ăнлантармалла. Хаçат-журнала йӳнĕрех хакпа çырăнтармалли вунă кунлăхра ĕç аван каять. Аслăрах çултисем «Хыпар», «Капкăн», «Хресчен сасси», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Çамрăксен хаçачĕ» çырăнаççĕ. Ачасем «Непоседа», «Школьник», «Тетте» ыйтаççĕ. Çамрăксем вырăсла кăларăмсене ытларах кăмăллаççĕ. Халĕ ялти ача-пăча вырăсларах калаçма тăрăшни сисĕнет. Çакă вара тăван чĕлхерен сивĕтет.

Сăмах çăмхине сӳтнĕ май хăтлă çуртйĕр умне çитсе чарăнтăмăр. Кунта Вячеслав Иванов вăрçă ветеранĕ пурăнать. 88 çулти арçын пурнăçран юласшăн мар-ха, халĕ те хаçатпа кăсăкланать, унти хыпарсене çывăх çыннисемпе сӳтсе явать. Пенсирен «Хыпар», «Хресчен сасси» хаçатсене çырăнчĕ. «Мĕн пулса иртнине хăпартса мар, тĕрĕссине çырăр. Ветерансем пирки те манса ан кайăр», – сĕнчĕ вăл мана эпĕ редакцирен пулнине пĕлсен.

Эльвира Ярикова хапха умĕнче кĕтсе илчĕ. Шкулта чылай çул ĕçленĕ хыççăн тивĕçлĕ канăва тухнă вăл. «Уроксенче «Самантпа», «Тантăшпа» усă куратăм. «Тăван Атăл» журнал материалсемпе те уроксене сахал мар хатĕрленнĕ, – каласа парать хĕрарăм. – Мана кашни хаçатрах тенĕн телепрограмма тухни тивĕçтермест. Тен, ăна пĕчĕк брошюра пек туса кăлармалла? Пушăннă вырăнта чăваш йăли-йĕрки, викторина, пуç ватмăш, камит пичетлесе кăларсан аванрах. «Тăван Атăлта» вара тĕрĕ ытларах кĕтетпĕр. Ялта пурăнсан та тĕрлеме вăхăт тупатпăрах», – пĕлтерчĕ шухăшне вăл.

Килтен киле çӳре-çӳре сисмесĕрех аслă урампа тухрăмăр. «Ыттисенче такăр çул хăçан пулĕ-ши? Йĕпе-сапара уйрăмах кансĕр. Хуракасси Выççăлккăна каякан çула çурри не кăна асфальт сарнă. 40 çынна яхăн пурăнакан яла пăрахса хăвараймăн. Унта та кĕтсех тăраççĕ. «Ывăнтăм, çанталăк япăххипе сирĕн пата çитеймерĕм», – тесе мĕнле калăн-ха?» – сăмахлать Смирнова. Куллен икĕ ялти 400 киле çитме тивет унăн. Тĕрлĕ кăларăм валеçнипе пĕрлех тавар та сутать. Хуçалăхра кирлĕ вак-тĕвекрен пуçласа сахăр-çăнăх таранах. Пысăкрах таварсене çĕклесе çӳреймĕн – çынсенчен саккас йышăнать. Хакĕ йӳнĕрех пулнипе туянакансем тупăнсах тăраççĕ. Кайран ăна почта машинипе кил умнех çитерсе параççĕ. Тавар ытларах сутсан шалăвĕ те пысăкрах тухать. Çапах тĕп ĕç – хаçат-журнал çырăнтарасси, вăхăтра çитерсе парасси.

Почтальонпа ирттернĕ кун ăнăçлă иртрĕ. Хĕвеле кура-и, Светлана Геннадьевнăн ăшă кăмăлне пăхса–и – çынсем çырăнтарăва хастар хутшăнчĕç. Кĕске хушăрах вырăсла тата чăвашла кăларăмсене утмăла яхăн çырăнчĕç. Чăвашлисене, паллах, ытларах. «Кăçал çырăнтару уйрăмах лайăх пырать. Хĕлле ял çынни ирĕклĕрех, хаçат тытса ларма вăхăт пур. Вĕсем çырăннине кура хамăн та кăмăл çĕкленет», – пĕтĕмлетрĕ Светлана Смирнова.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**

ÇЫРĂНТАРУ – 2014

ХЫПАР

Хаçат тăрăх ырра вĕренесчĕ –
«Хыпара» паянах çырăнса ĕлкĕресчĕ!

Хыпар – 460 тенкĕ те 86 пус Индексĕ – 54800
Хыпар-шăмат кун – 213 тенкĕ те 30 пус Индексĕ – 78353

ЯЛ ХĔРАРĂМĔ

# Аннесем пуртан эпир телейлĕ

**Пĕтĕм тĕнчери Анне кунĕнче, Хĕрарăмсен уявĕпе танлаштарсан, амăшĕсене тата çие юлнă хĕрарăмсене çеç саламлаççĕ. Ăна тĕрлĕ çĕр-шывра тĕрлĕ вăхăтра уявлаççĕ. Ытларахăшĕ çу уйăхĕн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче. Раççейре вара – чӳк уйăхĕн юлашки вырсарни кунĕнче. Украинăра çак куна çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче, Беларуçра юпан 14-мĕшĕнче, Грузире пушăн 3-мĕшĕнче, Арменире акан 7-мĕшĕнче, Казахстанра авăнăн 16-мĕшĕнче, Аслă Британире акан 3-мĕшĕнче палăртаççĕ.**

**АПШра, Канадăра, Китайра тата Японире Анне кунне çулсеренех çу уйăхĕн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче ирттереççĕ. Ăна 100 çул ытла палăртаççĕ.**

Унăн историйĕ çакнашкал: Хĕвел анăç Вирджинире пурăнакан Анна Джервис американка 1907 çулта аннесене сума суса уяв йĕркелесси çинчен пуçару турĕ. Вăхăтăр вилнĕ амăшне асăнса сăмах пуçарнă вăл. Аннесене халалласа çулталăкра пĕр кун уйăрмаллине палăртса Анна патшалăх учрежденийĕсене, саккун кăларакан органсене, паллă çынсем патне çырусем çырнă.

Вăл тăрăшни сая кайман. 1910 çулта Вирджини штатĕнче пирвайхи хут Анне кунне палăртнă. Ку уяв ăруран ăрăва тăсăлать. Мĕншĕн тесен анне пуриншĕн те чи çывăх, чи лайăх, чи ăш пиллĕ çын шутланать. Ачаран пуçласа мĕн çĕре кĕриччен этем хăйĕн чунĕринче пĕртен-пĕр çак сăнара упрать. Анне пулнă май хĕрарăмра ырă енсем çуралаççĕ: юрату, тӳсĕмлĕх, тăрăшулăх, ырă кăмăллăх.

Раççейре ку уява нумаях пулмасть палăртма тытăннă. Хушу 1998 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухнă. Ăна çулсеренех чӳк уйăхĕн юлашки вырсарни кунĕнче уявлаççĕ.

Анне кунĕ Раççей çемйисен кил-çуртне ерипен кĕрсе пырать. Ытти çĕр-шыври пек ятарлă йĕрке çук пирĕн. Сăмахран, АПШра тата Австралире çак кун çынсем тумтирĕсем çумне гвоздика чечеке тиреççĕ. Хĕрлĕ чечек – çыннăн амăшĕ сывă пулнине, шурри вара вилнине пĕлтерет.

Уявра аннесене сума суса ырă, ăшă сăмахсем каласчĕ. Ырлăхран халĕччен никам та ырман-ха. Пĕчĕк парнешĕн те чунĕсем хĕпĕртĕç. Ачисен ӳсĕмĕсем амăшĕсемшĕн пысăк телей. Тĕпренчĕкĕ ырă-сывă çитĕнни, çын хушшинче ятлă-сумлă пулни уншăн чăннипех савăнăç. Çакăнтан пысăк телей çуках.



А. Дейнека. Ача амăшĕ. 1932 ç.

Хамăрăн та, аннесен, ачасемшĕн тĕслĕх вырăнне пуласчĕ. Вĕсем те хăпартланма пултарччăр, ыррине çеç вĕренччĕр пиртен. Тăнăçлă çемьере кăна телейлĕ ачасем çитĕнеççĕ. Ашшĕ-амăшĕн шăпи тĕпренчĕкне пырса тивет. Çемьене упрасси, ачана ырă-сывă çитĕнтересси вара, тем каласан та, ытларах хĕрарăмран килет. Амăшĕн кĕлли ачана çитет.

Уяв умĕн пур аннене те тав тăватпăр, вĕсен умĕнче пуç таятпăр. Ачăрсем, мăнукăрсем ырă, ăшă сăмахпа савăнтарччăр сире, сăн-питĕр савăнăçпа çеç тултăр.

# 15 ачаллă, 38 мăнуклă

Ялта ăна пурте Валя тесе чĕнеççĕ. Валерия Ивановна Васильева (хĕр чухнехи хушамачĕ Мострова) 1938 çулта Мăн Явăшра çуралнă. Кăçал 75 çулхи юбилейне паллă турĕ. Правительство ăна икĕ хутчен «Ача амăшĕн мухтавĕ» орденпа наградăланă. Вăл – ĕç ветеранĕ, 15 ача амăшĕ. Хăй вăхăтĕнче Волонтер ялĕнче пурăннă, фермăра ĕне пăхнă. Çавăн пекех Вăрнара сĕт турттарнă. Шăпах çак вăхăтра «Победа» колхозран сĕт турттаракан Матвей Васильевичпа паллашнă. Пĕр ачаллă хĕрарăм тăхăр ачаллă арçынна качча тухма килĕшнĕ. Çапла вара Хирпуç кинĕ пулса тăнă.

Матвей арăмĕ Галина вырăсчĕ. Ăна Алтай тăрăхĕнчен илсе килнĕ арçын. Шел те, вăл йывăр чире пула вăхăтсăр вилчĕ, тăхăр ачине тăлăха хăварчĕ.

Матвей Васильевича Валя тепĕр пилĕк ача çуратса пачĕ: Коля, Матвей, Валя, Вероника тата Вася. Йышлă çемье пуçĕ, «Победа» колхоз механизаторĕ 1982 çулта çĕре кĕчĕ. Çав çулах çемье Рункă ялне пурăнма куçрĕ.

Матвей Васильевичпа Валерия Ивановнăн виçĕ ачи халĕ пирĕнпе çук ĕнтĕ. Кĕçĕнни Василий тĕп килте пурăнать. Вăл Мускава ĕçе çӳрет, мăшăрĕпе тăватă ача çитĕнтереççĕ. Хăйсен вăйĕпе çĕкленĕ икĕ хутлă çĕнĕ çурта часах пурăнма куçасшăн.

Таньăпа Надя Рункăра çемье çавăрнă. Галя – Хирпуçне, Вероника Мăн Турхана качча тухнă. Людăпа Вова КамАЗпа ĕçлеççĕ, Вова – Братск хули çывăхĕнчи пĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ. Оля Волгоград облаçĕнчи ялта клуб заведующийĕнче тăрăшать. Светлана Иваново облаçĕнчи колхозра дояркăра ĕçленĕ, халĕ пенсире. Унăн ултă ача. Ĕçрен хăраман вăл, çамрăклах Волгоград облаçĕнче 8 çул дояркăра вăй хунă. Астрахань облаçĕнче пахча çимĕç те пухнă. Волонтерта 8 çул фермăра ĕне пăхнă, Вăрнара сĕт турттарнă. Пенсие тухсан та уй-хир ĕçне хутшăннă. Ачисене те ĕçпе çитĕнтернĕ.

15 ача пăхса ӳстернĕ Валерия Ивановна Рункăра ывăлĕн Николайăн килĕнче пурăнать. Унăн халĕ 38 мăнук, кĕçĕн мăнукĕсем 20 ытла. Пысăк чунлă, тӳсĕмлĕ хĕрарăма канлĕ ватлăх, çирĕп сывлăх сунас килет.

**Ирина ФЕОФАНОВА.**
**Вăрнар районĕ, Хирпуç ялĕ.**

# Турă пӳрни хапха умне килет

Автобус Муркаша çитнĕ çĕре тавралăх тĕттĕмленчĕ. Кĕрхи каç. Йĕп чиксен те куç курмасть. Тепĕр виçĕ çухрăм çуран утмалла, вăрман витĕр тухмалла Людмилăн. Сумкине алăран-алла куçарса, ывăлне çавăтса ял еннелле васкарĕ вăл. Уйăх каялла Иванран çыру илчĕ хĕрарăм. Ăна кĕтнине пĕлтернĕ каччă.

Чунĕ вăркать Людмилăн. Кĕрхи путсĕр çанталăк пекех. «Çамрăк чух мĕншĕн суккăр пултăм-ши? Аннене итлемерĕм çав. Иван пирки час-часах калатчĕ вăл», – пăшăрханса шухăшларĕ çамрăк хĕрарăм. Ун чухне вăл Валерăна саватчĕ.

Савнийĕ Анаткасри Раисăпа пĕрлешнине пĕлсен Людмила вăрман хĕрринчи пысăк пĕвене сикрĕ. Ăна ун чухне шкулта пĕрле вĕреннĕ Иван çăлса хăварчĕ.

Пĕр парта хыçаларах ларатчĕ вăл. Тĕлĕнмелле ăслă каччăччĕ. Кăткăс задачăсене çăмăллăн шутлатчĕ. Çавна май учитель пĕрмаях Ивана доска умне кăларатчĕ. Ашшĕне хывнă тетчĕç ун пирки. Шел те, шкулти экзаменсем вăхăтĕнче ашшĕ сарăмсăр çĕре кĕчĕ.

Уроксем хыççăн Иван яланах Людмилăна кĕтсе тăратчĕ, унпа пулма тăрăшатчĕ. Анчах хĕр урăххине саватчĕ. Ытла та айван пулнă ун чухне. Çумри телейне асăрхаман вăл.

Унăн çуралнă кунне Иван пымарĕ. Хăнасем тухса кайсан Людмилăпа Валера иккĕшĕ çеç юлчĕç. Каччă хăйне ачашланине, хывăнтарнине те асăрхаса ĕлкĕреймерĕ хĕр.

Унтанпа виçĕ çул иртрĕ. Пĕчĕк Матвей сывă ӳсни амăшне савăнтарать. Ача сачĕ тепĕр çур çул пуласса шантарчĕç. «Нимĕнле арçын та кирлĕ мар мана, ывăл ӳсет. Турă сывлăх патăр çеç ăна», – терĕ вăл.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Пĕтĕм пурнăçне ывăлне пачĕ хĕрарăм. Уншăн çеç пурăнчĕ. Ытти ачаран лайăххах тăхăнтартма, чи тутлине çитерме тăрăшрĕ.

Пĕррехинче ĕçрен таврăннă чух кĕтмен çĕртен ун çулне Иван пӳлчĕ. «Ырă каç сунатăп, Людмила!» – алăран тытса чарчĕ ăна каччă. Хăй кăштах вăтанать. Людмила сывлăх сунса пуçне сĕлтрĕ.

«Калаçмалли пурччĕ. Тен, тĕл пулăпăр паян? Каçхи сакăр сехетре ял вĕçĕнчи шурă хурăн умĕнче сана кĕтетĕп», – терĕ каччă çамрăк хĕрарăм аллине вĕçертмесĕр. Людмила пĕр вăхăт чĕнмерĕ, кайран килĕшрĕ.

Çамрăксен калаçăвне пĕр хурăн çеç илтрĕ. «Шкулта вĕреннĕ чухнех эпĕ сана килĕштернĕ. Матвей ашшĕ эпĕ пулăп. Шансам мана, ĕненсем», – терĕ Иван ун чухне.

... Людмила сисмесĕрех вăрмана пырса кĕчĕ. Сасартăк куçĕ шывланчĕ, чĕри хыттăн тапма тытăнчĕ. Вĕсем пысăк мар, пăхсан витĕр курăнать. Çапах та пĕччен чух чуна шиклентерет. Шăлт-шалт, шăтăр-шатăр тунине илтсен Людмила ывăлне хăй çумне пăчăртарĕ. Хĕрарăм чарăнса тăчĕ. Çак вăхăтра йывăç хыçĕнчен сутă курăнчĕ. Темĕн мĕлтлетрĕ, палланă сасă илтĕнчĕ. Иван иккен. «Турă пӳрни хапха умне килет», – тетчĕ амăшĕ. Тĕрĕсех çав.

**Валентина ЕГОРОВА. Шупашкар хули.**

Кăларăма
Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕ**
7.00 «ВАШЕ УТРО» (0+)
7.05 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ТУСЛĂХ ЙЫВĂÇĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (6+)
20.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)

**Ытлари кун, чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «ВАШЕ УТРО» (0+)
7.05 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ИЗМЕНИМ МИР» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
20.45 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КАЧЕСТВО» (12+)

**Юн кун, чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «ВАШЕ УТРО» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0)
19.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)

**Кĕçнерни кун, чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «ВАШЕ УТРО» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (6+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «КАЖДЫЙ ИМЕЕТ ПРАВО» (12+)
20.00 «ВРЕМЯ ЗДОРОВЬЯ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (12+)
20.45 «СТО ЛИЦ СТОЛИЦЫ» (6+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «СТО ЛИЦ СТОЛИЦЫ» (6+)

**Эрне кун, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «ВАШЕ УТРО» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
20.45 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)

**Шăмат кун, чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
9.00 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
9.30 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
10.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
10.30 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
11.00 «НАШ КОНЦЕРТНЫЙ ЗАЛ» (12+)
11.30 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
15.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
15.30 «ТУСЛĂХ ЙЫВĂÇĔ» (12+)
16.00 «РАЗ, ДВА – ГОРЕ НЕ БЕДА». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.45 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
18.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
18.30 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
19.00 «СТО ЛИЦ СТОЛИЦЫ» (6+)
19.30 «РОТАЦИЯ». ТЕЛЕВИЗИОННЫЙ МУЗЫКАЛЬНЫЙ ПРОЕКТ (12+)
20.00 «ÇАПЛА ПУЛТĂР!» (12+)

**Вырсарни кун, раштав уйăхĕн 1-мĕшĕ**
9.00 «НАШ КОНЦЕРТНЫЙ ЗАЛ» (12+)
9.30 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (12+)
10.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
10.30 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
11.00 «РОТАЦИЯ». ТЕЛЕВИЗИОННЫЙ МУЗЫКАЛЬНЫЙ ПРОЕКТ (12+)
11.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
15.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
15.30 «ЗМЕЕЛОВ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
18.00 «ЮБИЛЕЙНЫЙ КОНЦЕРТ, ПОСВЯЩЕННЫЙ 50-ТИ ЛЕТИЮ ТВОРЧЕСКОЙ ДЕЯТЕЛЬНОСТИ С.А. КОНДРАТЬЕВА» (12+)

ÇЫРĂНТАРУ – 2014

Тантăш
Самант

Ача-пăчана хаçат-журналсăр хăварар мар – «Тантăш», «Самант», «Тетте» çырăнса парар!

Тетте Игрушка

**Тантăш – 192 тенкĕ те 18 пус.** Индексĕ – 54802
**Самант – 155 тенкĕ те 64 пус.** Индексĕ – 73208
**Тетте – 119 тенкĕ те 58 пус.** Индексĕ – 73771

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Çӳк, 20 – юн кун | Çӳк, 21 – кĕçнерни кун | Çӳк, 22 – эрне кун | Çӳк, 23 – шăмат кун | Çӳк, 24 – вырсарни кун | Çӳк, 25 – тунти кун | Çӳк, 26 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 8.38 | 8.39 | 8.41 | 8.43 | 8.45 | 8.47 | 8.49 |
| | анать | 16.34 | 16.33 | 16.31 | 16.30 | 16.29 | 16.27 | 16.26 |
| Кун тăршшĕ | | 7.56 | 7.54 | 7.50 | 7.47 | 7.44 | 7.40 | 7.37 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун |
| | | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче |

## ТЕЛЕПРОГРАММА (чӳк, 25–30, раштав, 1)

### ТУНТИ КУН, 25

**ТВЦ**

6.00 «Настроение»
8.30 Х/ф «У ТИХОЙ ПРИСТАНИ» 12+
9.55, 21.45 Петровка, 38 16+
10.10, 11.50 Х/ф «СУВЕНИР ДЛЯ ПРОКУРОРА» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
12.25 «Постскриптум» 16+
13.25 «В центре событий» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
16.00 Х/ф «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
17.50 «Найти хозяина» 12+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «СЧАСТЛИВЧИК ПАШКА» 16+
22.20 Х/ф «МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ» 12+
23.10 Без обмана. «Кто делает еду?» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 «Футбольный центр»
1.05 «Мозговой штурм. Будущее без антибиотиков?» 12+
1.35 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
3.30 Х/ф «ОТЕЦ БРАУН» 16+
5.25 «Осторожно, мошенники!» 16+

**Рен-ТВ**

5.00, 16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
6.00 М/с «Бэтмен» 6+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 23.50 «Экстренный вызов» 16+
8.30, 12.30, 19.00, 23.30 «24» 16+
9.00 Д/ф «Оружие Третьей мировой» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
18.00 «ВЕРНОЕ СРЕДСТВО» 16+
19.30 Т/с «БЕЗ СРОКА ДАВНОСТИ» 16+
20.30 «Военная тайна» 16+
0.10, 3.10 Т/с «ПОСЛЕДНЯЯ МИНУТА» 16+

### ЫТЛАРИ КУН, 26

**ТВЦ**

6.00 «Настроение»
8.35 Х/ф «СУРОВЫЕ КИЛОМЕТРЫ» 6+
10.25 Д/ф «Жанна Болотова. Девушка с характером» 12+
11.10, 21.45 Петровка, 38 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «НЕМОЙ» 16+
13.40 Без обмана. «Кто делает еду?» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 «Большая вода Амура» 12+
15.30 Х/ф «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
16.55 «Доктор И...» 16+
17.50 «Истории спасения» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «СЧАСТЛИВЧИК ПАШКА» 16+
22.20 Х/ф «МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ» 12+
23.10 Д/ф «Удар властью. Галина Старовойтова» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 Х/ф «КАМЕНСКАЯ» «УБИЙЦА ПОНЕВОЛЕ» 16+
2.40 Х/ф «СУВЕНИР ДЛЯ ПРОКУРОРА» 12+
4.30 Д/с «ЭВОЛЮЦИЯ ЖИЗНИ НА ЗЕМЛЕ» 6+
5.05 «Дом вверх дном» 12+

**Рен-ТВ**

5.00 Т/с «ПОСЛЕДНЯЯ МИНУТА» 16+
6.00 М/с «Бэтмен» 6+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 23.50 «Экстренный вызов» 16+
8.30, 12.30, 19.00, 23.30 «24» 16+
9.00 Д/ф «Звезды на службе» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «ВЕРНОЕ СРЕДСТВО» 16+
19.30 Т/с «БЕЗ СРОКА ДАВНОСТИ» 16+
20.30 «Территория заблуждений» 16+
22.30 «Пища богов» 16+
0.10, 2.50 Х/ф «ИДЕАЛЬНЫЙ МИР» 16+

### ЮН КУН, 27

**ТВЦ**

6.00 «Настроение»
8.30 Х/ф «ДЕВУШКА С ГИТАРОЙ» 6+
10.20 Д/ф «Сны и явь Михаила Жарова» 12+
11.10, 21.45 Петровка, 38 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «НЕМОЙ» 16+
13.40 Д/ф «Удар властью. Галина Старовойтова» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 «Наша Москва» 12+
15.30 Х/ф «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
16.55 «Доктор И...» 16+
17.50 Линия защиты 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.55 Х/ф «ОПЕРАЦИЯ «ГОРГОНА» 12+
22.20 Х/ф «МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ» 12+
23.10 «Хроники московского быта. Звезду на нары» 12+
0.00 События. 25-й час
0.25 «Русский вопрос» 12+
1.15 Х/ф «СУРОВЫЕ КИЛОМЕТРЫ» 6+
3.05 Д/ф «Три смерти в ЦК» 12+
4.10 Д/с «ЭВОЛЮЦИЯ ЖИЗНИ НА ЗЕМЛЕ» 6+
4.55 «Дом вверх дном» 12+

**Рен-ТВ**

5.00 Х/ф «ИДЕАЛЬНЫЙ МИР» 16+
5.30 «Дальние родственники» 16+
6.00 М/с «Бэтмен» 6+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30, 11.00 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 23.50 «Экстренный вызов» 16+
8.30, 12.30, 19.00, 23.30 «24» 16+
9.00 Д/ф «Битва за нефть» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «ВЕРНОЕ СРЕДСТВО» 16+
19.30 Т/с «БЕЗ СРОКА ДАВНОСТИ» 16+
20.30 «Нам и не снилось»: «Реликвия из аббатства» 16+
0.10, 2.50 Х/ф «СЕКРЕТЫ ЛОС-АНДЖЕЛЕСА» 16+

### КĔÇНЕРНИ КУН, 28

**ТВЦ**

6.00 «Настроение»
8.30 Х/ф «КРУГ» 12+
10.20 Д/ф «Владимир Этуш. Меня спасла любовь» 12+
11.10, 21.40 Петровка, 38 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «БИЛЕТ НА ДВОИХ» 16+
13.40 «Хроники московского быта. Звезду на нары» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 «Наша Москва» 12+
15.30 Х/ф «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
16.55 «Доктор И...» 16+
17.50 «Осторожно, мошенники!» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.50 Х/ф «ОПЕРАЦИЯ «ГОРГОНА» 12+
22.20 Х/ф «МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ» 12+
23.10 Д/ф «Лунатики. Тайная жизнь» 12+
0.00 События. 25-й час
0.35 Х/ф «ИДЕНТИФИКАЦИЯ» 16+
2.20 Х/ф «РОГАТЫЙ БАСТИОН» 12+
4.00 Д/с «Эволюция жизни на Земле» 6+
4.55 «Дом вверх дном» 12+

**Рен-ТВ**

5.00 Х/ф «СЕКРЕТЫ ЛОС-АНДЖЕЛЕСА» 16+
5.30 «Дальние родственники» 16+
6.00 М/с «Бэтмен» 6+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 23.50 «Экстренный вызов» 16+
8.30, 12.30, 19.00, 23.30 «24» 16+
9.00 «Нам и не снилось»: «Реликвия из аббатства» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «ВЕРНОЕ СРЕДСТВО» 16+
19.30 Т/с «БЕЗ СРОКА ДАВНОСТИ» 16+
20.30 «Великие тайны. Храмы богов» 16+
21.30 «Эликсир молодости» 16+
22.30 «Какие люди!» 16+
0.10, 3.20 Х/ф «НЕ ГОВОРИ НИ СЛОВА» 16+

### ЭРНЕ КУН, 29

**ТВЦ**

6.00 «Настроение»
8.30 Х/ф «САША-САШЕНЬКА» 12+
9.55 Х/ф «БЕЗ ВЕСТИ ПРОПАВШИЙ» 6+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «БИЛЕТ НА ДВОИХ» 16+
13.40 Д/ф «Лунатики. Тайная жизнь» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 «Наша Москва» 12+
15.30 Х/ф «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
16.50 «Доктор И...» 16+
17.50 «Неуловимые мстители» 12+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Х/ф «ПУАРО АГАТЫ КРИСТИ» 12+
21.45, 0.50, 5.10 Петровка, 38 16+
22.25 Х/ф «НЕ МОГУ СКАЗАТЬ «ПРОЩАЙ» 6+
0.15 «Спешите видеть!» 12+
1.05 Х/ф «ОПЕРАЦИЯ «ГОРГОНА» 12+
4.35 Д/с «ЭВОЛЮЦИЯ ЖИЗНИ НА ЗЕМЛЕ» 6+

**Рен-ТВ**

5.00 Х/ф «НЕ ГОВОРИ НИ СЛОВА» 16+
5.30 «Дальние родственники» 16+
6.00 М/с «Бэтмен» 6+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30, 22.30 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00 «Экстренный вызов» 16+
8.30, 12.30, 19.00 «24» 16+
9.00 «Великие тайны. Храмы богов» 16+
10.00 «Эликсир молодости» 16+
11.00 «Представьте себе» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «ВЕРНОЕ СРЕДСТВО» 16+
19.30 «Тайны мира» с Анной Чапман: «Мумия. Возвращение из мертвых» 16+
20.30 «Странное дело»: «Танцы небожителей» 16+
21.30 «Секретные территории»: «Кочевники во Вселенной» 16+
0.00 Т/с «ЧЕРКИЗОНА. ОДНОРАЗОВЫЕ ЛЮДИ» 16+

### ШĂМАТ КУН, 30

**ТВЦ**

5.30 Марш-бросок 12+
6.05 АБВГДейка
6.35 Х/ф «ДЕВУШКА С ГИТАРОЙ» 6+
8.30 Православная энциклопедия 6+
9.00 Х/ф «СКАЗКА О ЦАРЕ САЛТАНЕ»
10.25 «Добро пожаловать домой!» 6+
11.20 Петровка, 38 16+
11.30, 14.30, 23.55 События
11.45 Х/ф «ВИЙ» 12+
13.15, 14.45 Х/ф «ДОМ СОЛНЦА» 12+
15.30 Х/ф «ТРИ МУШКЕТЕРА. ПОДВЕСКИ КОРОЛЕВЫ» 6+
17.15 Х/ф «ЗАКОН ОБРАТНОГО ВОЛШЕБСТВА» 12+
21.00 «Постскриптум»
22.00 «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» Новый сезон 12+
0.15 «Временно доступен» Михаил Леонтьев12+
1.20 Х/ф «НОЧНЫЕ ПОСЕТИТЕЛИ» 12+
3.00 Д/ф «Секретная миссия. Рука Москвы» 12+
3.55 «Москва слезам не верит» 12+
4.15 «Дом вверх дном» 12+

**Рен-ТВ**

5.00 Т/с «ЧЕРКИЗОНА. ОДНОРАЗОВЫЕ ЛЮДИ» 16+
9.40 «Чистая работа» 12+
10.30 «Территория заблуждений» 16+
12.30 «24» 16+
13.00 «Военная тайна» 16+
16.00 «Секретные территории»: «Кочевники во Вселенной» 16+
17.00 «Тайны мира» с Анной Чапман: «Мумия. Возвращение из мертвых» 16+
18.00 «Представьте себе» 16+
19.00 «Неделя» 16+
20.15, 2.20 Х/ф «СВОЛОЧИ» 16+
22.15, 4.15 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ БРОНЕПОЕЗД» 16+

### ВЫРСАРНИ КУН, 1

**ТВЦ**

ТВЦ
5.20 Д/с «Эволюция жизни на Земле» 6+
6.35 Х/ф «ПРИМИТЕ ТЕЛЕГРАММУ В ДОЛГ» 6+
8.00 «Фактор жизни» 6+
8.30 Х/ф «ИНСПЕКТОР УГОЛОВНОГО РОЗЫСКА» 12+
10.20 «Барышня и кулинар» 6+
10.55 «Дефиле по-русски» 16+
11.30, 0.05 События
11.45 Х/ф «НЕ МОГУ СКАЗАТЬ «ПРОЩАЙ» 6+
13.35 «Смех с доставкой на дом» 12+
14.20 Михаил Грушевский в программе «Приглашает Борис Ноткин» 12+
14.50 Московская неделя
15.20 Петровка, 38 16+
15.30 Х/ф «ОТЕЦ БРАУН» 16+
17.25 Х/ф «ДАЛЬШЕ - ЛЮБОВЬ» 16+
21.00 «В центре событий»
22.00 Х/ф «КАМЕНСКАЯ» «СМЕРТЬ РАДИ СМЕРТИ» 16+
0.25 Х/ф «ТРИ МУШКЕТЕРА. ПОДВЕСКИ КОРОЛЕВЫ» 6+
2.20 Х/ф «ПУАРО АГАТЫ КРИСТИ» 12+
4.20 Д/ф «Завербуй меня, если сможешь!» 12+

**Рен-ТВ**

5.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ БРОНЕПОЕЗД» 16+
8.15 Т/с «ЗНАХАРЬ: ОХОТА БЕЗ ПРАВИЛ» 16+
23.15 «Репортерские истории» 16+
23.45 «Неделя» 16+
1.00 «Смотреть всем!» 16+
2.30 Х/ф «КАМЕННАЯ БАШКА» 16+
4.20 «Дальние родственники» 16+

## Çунат хушни

– Мăшăрăм, сăвă çырăнми пулчĕ-çке. Хавхалану çуначĕ кирлĕччĕ, – каланă пĕр поэт хăйĕн арăмне.

Лешĕ упăшки ыйтнине хăпăл-хапăлах тивĕçтерме шантарнă:

– Буфетра çунатсем сутнине курнăччĕ-ха – халех туянса килетĕп.

## «КАПКĂН» КĔТЕСĔ

# Яшкаран яшкана...

Лавр çулçине яшкана мĕн тума яраççĕ? Ыйту та вара... Паллах, тут кĕртме. Унсăр нимĕн тути те пулмасть тесшĕн-и? Каллех... Ара, çав кăшăрка типĕ çулça пурнăç тыткăчи вырăнне хумăпăр ĕнтĕ. Унсăр ним те мар пурăнма пулать. Нумай çын ăна пачах пĕлместтĕр.

Анчах пĕр хăнăхсан лавр çулçине апата ярасах килет пуль çав. Кулине аппа пирки калап-ха. Вăл пĕчченех ĕмĕр ĕмĕрлет. Кунçулĕ çавнашкал килсе тухнă темелле-ши – качча кайса çемье çавăрайман. Халĕ пенсире. Шел, пенси укçи питĕ сахал, нимĕн тума та çитмест. Куллен-кун перекетлеме тивет. Çав шутра... лавр çулçине те.

Кунта ман юлташа итлĕр-ха, вăл каланă тăрăх çыратăп çак сăмахсене:

– Кулине аппа патне кайнăччĕ те, апат çиме лартрĕ. Яланхи йăлапа эпĕ яшкари лавр çулçине турилкке хĕррине тĕртсе хутăм, кайран, хĕрарăма чашăк-тирĕк çума пулăшнă чухне, ăна çӳп-çап витрине шăлса пăрахма тăтăм. Кулине аппа çавăнтах аллине тăсрĕ: «Тăхта, эпĕ хамах...» Вара çав çулçăсене пĕрле пуçтарса уйрăм савăта ячĕ. Эпĕ ыйтуллă пăхнине курсан куçне тартрĕ: «Яшкана тепĕр хут яратăп вĕсене...»

Юлташ çакна каласа парсан эпĕ тепĕр тĕслĕхе аса илтĕм: ку хутĕнче – пĕр какай шăммипе темиçе хут яшка пĕçернине. Ĕненмелле мар пек-и? Унашкалли те пулать. Хăвăр та илтнĕ-тĕр. Мĕн? Пуянсем мар, паллах. Чухăнсем.

Çитет-и? Пĕр ватă çын вĕретнĕ вĕри шыва сахăр песукĕ çине пăха-пăха ĕçни çинчен те каласа кăтартма пултаратăп. «Пылак» чей ĕçет ĕнтĕ вăл çапла.

Туятăп, кулас килмест сирĕн...

**Аркадий ПЕТРОВ**




## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

**ОАО «ЧУВАШВТОРМЕТ»**

Лицензия № ЧР 21/01/03 от 31.08.2001.

**ЗАКУПАЕМ ЛОМ ЦВЕТНЫХ И ЧЕРНЫХ МЕТАЛЛОВ ДОРОГО.**

**г. Чебоксары, Гремячевский проезд, 5 а. Тел.: (8352) 63-42-12, 63-51-84.**

**ПРОДАЮ**

**1. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**2. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**3. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**10. Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

**14. Гравмассу,** гравий, **песок,** щебень, **керамзит.** Доставка. Т. 89053465671.

**41.*Трактора МТЗ-320.4, 82,1, косилки, грабли, плуги, фрезы, опрыскиватели.*** Низкие цены. Доставка. **Все новое!** Тел.: 89278516858, (8352) 40-67-65.

**«Тăван Атăл», «Капкăн» çырăнсан Тунсăхламăн, тусăм, нихăçан!**

**ТĂВАН АТĂЛ**

Хакĕ – 251 тенкĕ те 76 пус
Индексĕ – 11529

**КАПКĂН**

Хакĕ – 122 тенкĕ те 10 пус
Индексĕ – 24608

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Атăл-Волга» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

http:// www.atal-volga.com,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2012 çулхи юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникаци сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче ПИ №ТУ 21-00259 номерпе регистрациленĕ.
Хаçата хатĕр позитивсенчен «Чăваш ЕН» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 4056 Тираж 4238

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.